**Тăван чĕлхем**

Анне чĕлхи, чунри тăван чĕлхемçĕм!
Ăс-хал мăскалĕ, шухăшсен арчи!
Эс маншăн яланах патша та элчĕ,
Эп сан умра – сас паллисен тарçи!

Сана тискеррĕн урлă-пирлĕ ватрĕç,
Мăшкăлласа та катрĕç хăватна –
Империсен йӳçсе хăпарнă вачĕ
Пултараймарĕ тымарна татма!

Таса та аслă, çепĕç те сăпайлă,
Çиллентерсен, аслатилле пулсан
Сана кампа, чĕлхемçĕм, эпĕ пайлăп –
Тăван йышпа пĕрле упрамасан...

*1970*

*Станьял, В. Тăван чĕлхем / В. Станьял // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 424.*